ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧЕ ПРЕДПРИНИМАТЕЛЬСЕН ПРАВИСЕНЕ ХЎТЁЛЕС ЕНЁПЕ ЁÇЛЕКЕН УПОЛНОМОЧЕННĂЙ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КЁРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2024 çулхи раштав уйăхĕн 24-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикинче Предпринимательсен прависене хўтёлес енёпе ёçлекен уполномоченнăй çинчен" 2013 çулхи утă уйăхĕн 30-мĕшĕнчи 57 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 7 №; 2014, 6, 12 №-сем; 2015, 5 №; 2016, 2 №; "Республика" хаçат, 2019, нарăс уйăхĕн 15-мĕшĕ; 2020, пуш уйăхĕн 18-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 9-мĕшĕ; 2021, раштав уйăхĕн 8-мĕшĕ; 2022, çу уйăхĕн 5-мĕшĕ; 2023, ака уйăхĕн 5-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 12 статьяна çакăн пек çырса хурас:

"12 статья. **Уполномоченнăй полномочийĕсем срокчен вĕçленесси**

1. Уполномоченнăй полномочийĕсем Чăваш Республикин Пуçлăхĕн йышăнăвĕпе çак тĕслĕхре срокчен вĕçленеççĕ:

1) Уполномоченнăй вилсен;

2) суд Уполномоченнăя хавшак ăс-хакăллă, хавшакланнă ăс-хакăллă е хыпарсăр çухалнă тесе йышăнсан е тата вилнĕ тесе пĕлтерсен;

3) суд Уполномоченнăя айăпласа йышăннă приговор саккунлă йĕркепе вăя кĕрсен;

4) Раççей Федерацийěн гражданлăхне çухатсан е ют патшалăх гражданлăхне (подданствине) илсен е тата пурăнма ирěк панине е Раççей Федерацийěн гражданинěн ют патшалăх территорийěнче ялан пурăнма право пуррине ěнентерекен ытти документ илсен.

2. Раççей Федерацийěн Президенчě çумěнчи Предпринимательсен прависене хŭтěлес енěпе ěçлекен уполномоченнăйпа килěштернě тăрăх Уполномоченнăй полномочийěсем Чăваш Республикин Пуçлăхěн йышăнăвěпе çак тěслěхре срокчен вěçленме пултараççě:

1) полномочисене пурнăçлама пăрахни çинчен хăй заявлени çырса парсан;

2) медицина заключенийěпе килěшŭллěн палăртнă сывлăх тăрăмне пула е ытти сăлтавсемпе хăйěн тивěçěсене вăрах вăхăт хушши (тăватă уйăхран кая мар) пурнăçлама пултараймасан;

3) Федерацин "Коррупципе кěрешесси çинчен" 2008 çулхи раштав уйăхěн 25-мěшěнчи 273-ФЗ №-лě саккунěн 13^1 статйипе пăхса хăварнă тěслěхсенче шанăçран тухсан;

4) вăл федераци саккунěсемпе, çак Саккунпа тата Чăваш Республикин ытти саккунěсемпе палăртнă ытти требованисене, пŭлŭсене тата чарусене пăхăнмасан.

3. Уполномоченнăя шанăçран тухнине пула должноçран хăтарас ěçе Федерацин "Коррупципе кěрешесси çинчен" 2008 çулхи раштав уйăхěн 25-мěшěнчи 273-ФЗ №-лě саккунěн 13^1 статйипе пăхса хăварнă тěслěхсенче Раççей Федерацийěн саккунěсемпе тата Чăваш Республикин саккунěсемпе килěшŭллěн ирттернě тěрěслев (ăна ирттернě хыççăн шанăçран тухнине пула должноçран хăтармалли сăлтав пулса тăракан кăлтăк тупса палăртнă) кăтартăвěсем тăрăх пурнăçлаççě.";

2) 13 статьян 3-мěш пайěн 4-мěш пунктěнче "Чăваш Республикин ěç тăвакан власть органěсен" сăмахсене "Чăваш Республикин ěç тăвакан органěсен" сăмахсемпе улăштарас;

3) 18 статьян 3-мěш пайěнче "Чăваш Республикин ěç тăвакан влаçěн органěн" сăмахсене "Чăваш Республикин ěç тăвакан органěн" сăмахсемпе улăштарас;

4) 19 статьян 3-мěш пайěнче "Чăваш Республикин ěç тăвакан влаçěн органěсем" сăмахсене "Чăваш Республикин ěç тăвакан органěсем" сăмахсемпе улăштарас.

2 статья

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ — О. Николаев

Шупашкар хули
2024 çулхи раштав уйăхĕн 25-мĕшĕ
100 №